**2008 çул - Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ**

# Пукравра телей пулчĕ Кристинăн

Хĕр ача çĕнĕ ашшĕпе амăшĕпе пĕрле çăмăл автомашина çине кĕрсе ларсан, Куславккари ачасен çуртĕнче юлакан 45 ачаран пĕри – Кристина юлташĕ ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ:

–Мĕншĕн Кристинăна киле илсе каяççĕ, мана вара – çук.

Çĕре мар, чĕри çине тумларĕ тейĕн куççулĕ... Нумайччен йĕме чарăнаймарĕ вăл. Сывă-ши унăн ашшĕ-амăшĕ? Анчах вĕсем те, Муркаш районне çула тухнă тусĕ те илтеймерĕç унăн хурланчăк сассине. Ахаль те ăшах мар Пукрав çилĕ интернат чӳречинчен хытах шаккарĕ:

– Лăплан, хĕр ача, чунна ан хускат, сан та телейӳ пулатех, – тесе каласшăн пулчĕши?..

9 çулхи Кристина вара телей авăрне (çумра аттепе анне пулни мĕн пысăкăш телей вăл) лекнĕсер, юлташĕ макăрнине астурĕ пулин те, хăйне çемьене пурăнма илекен амăшĕ çумне тĕршĕнчĕ. 4 çулта чухнех интерната лекнĕскершĕн, тăван çынсен ăшшине туйманскершĕн, çакăнтан хакли нимĕн те пулмарĕ.

–Анне, атте, анне, атте... – Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккассинче пурăнакан Александровсен килне çитиччен миçе хутчен каламарĕ пуль вăл çак тахçанах каламан сăмахсене. Ашшĕ вилнĕ, амăшĕ енчен те телей пӳрмерĕ шăпа: аслисем 5-ĕн ӳссе çитĕннĕ ĕнтĕ, тепĕр 6-шĕ вара çакăнти интернатра çитĕннĕ, çитĕнеççĕ. Унта чух хĕр ача пиччĕшĕ-аппăшĕсемпе калаçатчĕ. Кунта килсен вара хăйне юлташ кирлине сисме пуçларĕ. Телее, класра тахçан палланă ачана кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç Кристинăна. Килте те Фаина Петровнăпа Владимир Михайловичăн ывăлĕ те тăван йĕмăкĕ вырăнне хурса йышăнчĕ ăна .

–Коля та Коля, тесе кăна тăрать Кристина ăна.

Çапла вара çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ хĕр ачан. Кăçалхи Хĕл ăсатăвĕн уявĕнче ашшĕпе амăшĕ хушшинче пыракан хĕр ачана курсан, чун савăнчĕ. Хитре тăхăннă хĕр ача телейлĕн темĕн çинчен калаçать çывăх çыннисемпе. Александровсем 4-7 çулсенчи хĕр ачана çемьене пурăнма илес тесе кайнăччĕ Куславккана. Анчах та вĕсем шутланă ӳсĕмри ача пулмарĕ, Кристина вара пĕрре пăхсах кăмăла кайрĕ.



–Пыратăн-и пирĕнпе пурăнма? – тесе ыйтсан, хĕр ача тӳрех килĕшрĕ.

–Пыратăп, – терĕ вăл. Тахçанах кĕтнĕ пулмалла вăл ырă çынсенчен çак сăмахсене.

–Килĕшмесен, пĕр эрнерен каялла илсе килĕр, – тесе ăсатрĕç вĕсене интернатран.

Çапла калама сăлтавĕ те пулнах пулĕ. Александровсем ача илме пынă чухне вĕсенчен маларах ачасене илсе кайнă икĕ çемьерен пĕри ачине каялла илсе килнĕ.

4-5 çул ача усрава илме шут тытнă Александровсен ун пек шухăш вара пач та пулмарĕ.

–Тӳрех пӳрт тулса ларчĕ, – аса илет Владимир Михайлович çемье йышланнă куна. Мăшăрĕ Фаина Петровна ĕмĕрĕпех ачасене вĕрентнĕрен пулĕ, тӳрех ача чунĕ патне çул тупрĕ. Мăшăрсем иккĕшĕ те 7 ачаллă çемьере çитĕннĕскерсем, йышлă çемьере туслăх мĕнлине лайăх пĕлеççĕ.

Хĕр ачана тепĕр икĕ кунтанах шкула ячĕç. Вăл пĕчĕккĕн çемьери йĕркене хăнăхма пуçларĕ. Интернатран килнĕ чух уринче çĕтĕк кроссовкиччĕ. Ун чухне хытах ӳсĕретчĕ вăл. Амăшĕ ăна тӳрех Шупашкарти пасара илсе кайрĕ, çĕнĕ тумтир, атăпушмак илсе пачĕ. Çук, хĕрача ăна илсе пар, кăна илсе пар, тесе каламасть. Килте вара ашшĕпе амăшне мĕн вăй çитнĕ таран пулăшать: пӳрт-çурта пуçтарать, урай çăвать, хăйĕн япалисене те хăех çăвать тата ытти те.

Чунĕпе вара хăй интернатра пурăннă кунсене манаймасть пулас:

–Анне, эсĕ мана каялла интерната кайса ямастăн вĕт? – тесе ыйтать тепĕр чух.

Халь ĕнтĕ сăнĕ те малтанхи пек шуранка мар ĕнтĕ, хĕп-хĕрлĕ питлĕ. Интернатра пан улмипе апельсин ытларах панă пулсан, халĕ кашни кунах килте тĕрлĕрен улма-çырла илсе çитереççĕ. Малтанах нумай улма-çырлан ятне те пĕлместчĕ вăл.

Ашшĕпе амăшне вара хĕр ача çав тери юрататъ.

Пĕррехинче амăшĕ хăйне япăх туйрĕ. Кристина эмелне илсе килсе парать, шывне ĕçтерет.

–Анне, анне, – тесе йĕрет хăй, амăшĕ чирленипе хурланнине пытараймасть.

Çывăх çынсене пулăшма хăнăхса ӳсет çав çемьере ача, уншăн пăшăрханма, пĕрле савăнма вĕренет. Малтан апат-çимĕçе ирĕк ыйтса çеç илетчĕ пулсан, халь хăнăхса пырать ĕнтĕ, хăйне килти пек тытать. Ашшĕ пек Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ, композитор пек, баянпа калама вĕренес ĕмĕчĕ те пур. Халĕ те ăна тунсăхлă мар. Ташлакансен, шашкăлла вылякансен, ал ĕç кружокĕсене çӳрет. Интернатра чухне пуканесен театрĕнче вылянă вăл.

– Артист пекех вылять, – тет Фаина Петровна, хĕр ача карчăк рольне чуна килĕшмелле кăларнине аса илсе.

Телейлĕ паян Кристина çĕнĕ çемьере. Александровсем те савăнаççĕ çеç çемье йышне ӳстернĕшĕн. Паян вĕсен тепĕр ĕмĕт пур: тепĕр ачана çемьене пурăнма илес шухăшпа пурăнаççĕ.

Хальлĕхе вара районта Александровсемпе пĕрле пурĕ 8 çемьене 9 ачана пурăнма илнĕ. Тата 62 çемьере 79 ача опекунсемпе пурăнать. Çакăн пек, Александровсем пек ырă кăмăллă çынсем ытларах пулсан, телейсĕр ачасен йышĕ те палăрмаллах чакнă пулĕччĕ. Пур ачасен те ачалăхĕ телейлĕ пулнă пулĕччĕ. Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн тĕпренчĕкĕсемшĕн чунпа çунса тăрсан. Кăçал кăна ав 5 ашшĕ-амăшне хăйсен прависенчен хăтарнă. Район тата Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар сучĕсенче кĕçех тата пĕрер çакнашкал ĕç пăхса тухмалла. Хăратмасть-ши вĕсене хăйсен ачисене ача çурчĕ кĕтни? Мĕн шикленесси ара, ун пек пулнă пулсан, çав тарана çитмен те пулĕччĕç. Кристина пек ыр çынсен тĕлне лексен тем пекехчĕ вĕсен ачисем. Тăван ашшĕ-амăшĕсенче ашшĕ-амăш туйăмĕ çĕнĕрен вăрансан пушшех те. Киносенче те ĕç-пуç телейпе вĕçленессе кĕтетпĕр те. Камăн телейлĕ пулас килмĕ пурăннă чух. Ăнланасчĕ çакна ачисем çинчен маннă ашшĕ-амăшĕсен. Пурнăçăн хытса пыракан аллине персе парас марччĕ тăван тĕпренчĕкĕсене...

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: пĕрле вĕренекенсем Кристинăна çуралнă кунпа саламлаççĕ.**

# Ачасем сывă çитĕнччĕр

***Ачасем – пирĕн пуласлăх. Çавăнпа та вĕсем тата вĕсен проблемисем çинчен Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун умĕн калаçни çеç çителĕксĕр. Çакă Чăваш Республикин Президенчĕн иртнĕ çул Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çыруран та яр уççăнах курăнать: «Ачасене ӳстерместпĕр пулсан, вĕсен сывлăхĕпе чунне упрамастпăр пулсан, вĕсен пурнăçне çутăрах та пуянрах тумастпăр пулсан, пулăшу парас тесе вĕсен енне алла тăсмастпăр пулсан, пирĕн йĕркеллĕ пуласлăх пулмĕ» – тенĕ унта. Паян вара пирĕн калаçу ачасен сывлăхне сыхласси çинчен пулĕ. Ку тĕлĕшпе районти шур халатлă медицина ĕçченĕсем чăннипех те хытă тăрăшаççĕ. Ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсем çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ районти педиатртан М.П. Савельеваран Халĕ ăна сăмах:***

– Ачасен сывлăхне сыхлассипе районти медицина ĕçченĕсем нумай ĕçсем туса ирттереççĕ. «Сывлăх» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ку тĕлĕшпе профилактика ĕçне питĕ пысăк тимлĕх уйăратпăр: ача амăшĕн варĕнче выртнă чухнех. Районти тĕп больницăра та, Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ райбольницăра та, пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсенче те, районти пур медицинăпа сиплев учрежденийĕсенче те пулас амăшĕсен шкулĕсем ĕçлеççĕ. Иртнĕ çул вĕсенче 608 йывăр çын-хĕрарăма вĕрентнĕ, кăçалхи 5 уйăхра – 236 пулас амăшне. Çак ĕçе районти тĕп больницăн ача çуратмалли уйрăмĕнче малалла тăсаççĕ.

**– Маргарита Петровна, ача çурални – кашни çемьешĕн пысăк телей. Кашни ашшĕ-амăшĕ, больницăна е кирек ăçта кайсан та, шăпах вĕсен ачине пысăк тимлĕх уйăрасса шанать.**

– Çапла тăватпăр та. Иртнĕ çул акă районта 426 ача çуралчĕ. Ку вăл виçĕмçулхинчен 62 ача чухлĕ ытларах. Çут тĕнчене тин çеç килнĕ пепкепе унăн амăшне ача çуратмалли уйрăмран вĕсен çывăх çыннисемпе пĕрлех пуçламăш звенори медицина ĕçченĕсем те кĕтеççĕ: участоксенчи врачсем, патронаж сестрисем, фельдшерсем. Шăпах вĕсем ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕсене хăйсен сĕнĕвĕсемпе те пулăшсах тăраççĕ. Вĕсемех профилактика прививкисене вăхăтра туса ирттереççĕ. 2006-2007 çулсенче вируслă «В» гепатитран 5528 ачана прививка тунă, хĕрлĕ шатраран – 2335 ачана, грипран – çулсеренех 2700 ачана е ытларах та.

**– Ача ан чирлетĕр тесен ашшĕ-амăшĕн нумай пĕлмелле-çке. Кунта каллех шур халатлă сывлăх хуралçисен пулăшăвĕсĕр май çук.**

– Çакна шута илсе ĕнтĕ медицина учрежденийĕсенче сывă ачасене воспитани памалли шкулсем йĕркеленĕ. Вĕсем очно тата заочно майпа ĕçлеççĕ. Кунта уйрăмах сывă ачасен пӳлĕмне кирлĕ курăнакан пособисемпе тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне ырăпа асăнмалла. Иртнĕ çул кунти сывă ачасен пӳлĕмĕ республикăра 1 вырăна тухрĕ.

Ашшĕ-амăшĕсен уйрăмах пĕчĕк пепкисене тĕрĕс çитермеллипе ыйтусем нумай. Ачасене кăкăр сĕтне çитермелли, сывлăха çирĕплетмелли процедурăсем ирттермелли, ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен аталантармалли, психика тĕлĕшĕнчен вăхăтлă аталантармалли ыйтусемпе иртнĕ çул 676 пĕчĕк ача амăшĕ вĕреннĕ.

**– Юлашки çулсенче пĕчĕк ачасене те диспансеризаци витĕр кăларма пуçларĕç. Çакăн çинчен тĕплĕнрех ăнлантарсан аван пулмалла.**

– Ку, чăнах та, çапла. Кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ çулталăка çитиччензи ачасене обязательнăй йĕркепе диспансеризаци витĕр кăларатпăр: юн тата шăк анализĕсене илетпĕр, пуç мимине, чĕрене, пӳрене, купарчапа пĕçĕ шăммисене ультрасасăпа тĕпчетпĕр. Тĕрĕслемелли вăхăт çитсен ачасене врач-специалистсем пăхаççĕ, окулист, хирург, ортопед, отоларинголог, невролог, стоматолог. Енчен те ача сывлăхĕнче кирлĕ мар улшăнусем асăрхасан, тӳрех республикăри ачапăча поликлиникине тата çĕнĕрен усăлнă сывлăха çирĕплетмелли центра консультацине тата сиплеме яратпăр.

Каласа хăвармалла, иртнĕ çул çуралнă 426 ачанне пуринне те сывлăхне тĕпченĕ. Вĕсенчен 72-шĕнне вăл е ку енĕпе палăрнă чирсене сиплеççĕ, вĕсене ку тĕлĕшпе специалистсем пăхсах тăраççĕ.

**Л. ТУКТИНА калаçнă.**

**Республика кунне халалланă конкурс**

# Пултаруллисене палăртрăмăр

Район администрацийĕ тата районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ информаципе реклама материалĕсен «Муркаш районĕ: ĕнер, паян, ыран» смотр-конкурс ирттерчĕ. Вăл январĕн 16-мĕшĕнчен тытăнса апрелĕн 16-мĕшĕччченех пулчĕ. Çак вăхăтра питĕ нумай интереслĕ материал пухăнчĕ. Смотр-конкурс çак номинацисемпе иртрĕ:

- район е предприяти (организаци), ял историйĕ;
- геройсем юнашарах (пултаруллă та интереслĕ çынсем пирки);
- ыранхи паян пуçланать;
- сирĕн шанчăклă партнер (предприятисенчи тата организацисенчи паянхи ларутăру);
- ăнăçу никĕсĕ - сывă пурнăç йĕрки;
- ку интереслĕ;
- Муркаш районĕн бренчĕ;
- манăн Муркаш тăрăхĕ;
- историрен çаврăнса пăхни.

Жюри пурĕ 60 заявка тата 76 ĕç пăхса тухрĕ. Çавăн пекех районта пурăнакансенчен конкурс пирки çырнă 3 çыру килчĕ. Комисси вĕсене пурне те тимлĕн пăхса тухрĕ. «Район е предприяти (организаци), ял историйĕ» тата «Геройсем юнашарах» номинацисенче хутшăнма кăмăл тунисем йышлăрах пулчĕç. Çав хушăрах «Муркаш районĕн бренчĕ» тата «Ку интереслĕ» номинацисене ĕç тăратакансем пулманни пĕрре тĕлĕнтерчĕ, теппре шутлаттарчĕ те.

«Геройсем юнашарах» номинацинчи ĕçсем ытларах пирĕн районти ĕç çыннисем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă çынсем çинчен пулчĕç.

Тата акă мĕн каласа хăварас килет. Юнкăри, Орининти, Муркашри, Турайри вăтам шкулсенчи тата Муркашри лицейра вăй хуракан учительсем çак интереслĕ конкурса вĕренекенсене активлă явăçтарни курăнчĕ. Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ, пĕчĕк шкул пулсан та, виçĕ номинаципе ĕçсем тăратма пултарчĕ. Вĕсем хатĕрлесе панă материалсенчен эпир пирĕн районтан Андриян Николаевпа, Юрий Гагаринпа уçлăх вĕçевне кайма хатĕрленĕ çынсем пулни пирки пĕлтĕмĕр. Ытти шкулсен ертӳçисене те малашне çакăн евĕрлĕ конкурссене хутшăнма калас килет.

В.Т. Ершова «Чамăш ял историйĕ» ятлă ĕçне питĕ тарăн шухăшлă та интереслĕ хатĕрленине палăртмалла. Унта Оринин ял тăрăхĕн историйĕ çинче те, çак тăрăхри паллă çынсем çинче те питĕ тĕплĕн чарăнса тăнă. Çак ĕç ялăн хăйне май пĕчĕк энциклопедийĕ вырăнĕнчех пулмалла. Автор тăван ялне, тăван енне юратни те материалта тӳрех палăрать.

Л.Г. Петровапа Н.П. Арсентьева та конкурса питĕ пысăк ĕç тăратрĕç. Вĕсем хăйсен çемйин несĕлĕсене тишкернĕ: 1860 çултан тытăнса паянхи кун пурăнакан 300 тăван пирки тĕпчев тунă. Турай шкулĕнче вĕренекен В.Степановăн çут çанталăк палăкĕ - Çуткӳл çинчен пухса йĕркеленĕ ĕçĕ те пысăк хака тивĕç пулчĕ.

Муркаш район сучĕн коллективĕ конкурса икĕ илемлĕ альбом тата презентаци тăратрĕ. Муркашри тĕп больница ĕçĕ те питĕ çӳллĕ шайра пулчĕ. М.Г. Матросова тата Р.В. Иванова ĕçĕ çинче те чарăнса тăрас килет. Вĕсем конкурс валли «Оринин: чĕрене хаклă çынсем тата сăнарсем» ятлă кĕнекене кăларнă. Асăннă пур ĕçсем те конкурс условийĕсемпе килĕшсе тăраççĕ.

Тахçанах тунă сăн ӳкерчĕксен авторĕсене те пысăк тав сăмахĕсем каламалла. «Историрен çаврăнса пăхни» номинаци чăнах та пирĕн район историне куç умне тӳрех кăларса тăратма пулăшрĕ. Хурашурă тĕслĕ сăн ӳкерчĕксем - район историйĕн саманчĕсем. Çавăнпа та камăн çакăн евĕрлĕ Муркаш ен историне кăтартса паракан сăн ӳкерчĕксем пур, вĕсене те кивĕ сăн ӳкерчĕксемпе пирĕн пата чĕнетпĕр. Сăн ӳкерчĕксене çĕнетсе район администрацийĕн сайчĕ çине вырнаçтаратпăр. Сăн ӳкерчĕксене тата çĕнетсе илемлетнĕ кописене тавăрса паратпăр (Тел.: 2-18-96). Сайтри çак страница вара пур таврапĕлӳçĕне те, историпе интересленекенсене те, шкул ачисемпе студентсене те интереслĕ пуласса шанатпăр.

Шел пулин те, интернет-сăлав ирттерме пирĕнтен килмен сăлтавсене пула ирттерме май килмерĕ. Ĕçсен калăпăшĕсем пысăк пулчĕç.

Конкурсри ĕçсен çитменлĕхĕсем пирки те кăшт каласа хăварасшăн. Хăш-пĕр материалсенче сăн ӳкерчĕксен копийĕсем ксерокспа кăларнине пула питĕ пĕчĕк пахалăхлă пулчĕç. Чăваш шрифчĕпе çыхăннă пăтăрмахсем пулни те палăрчĕ. Çапах та конкурса хутшăннă пур автора та тав тăвас килет.

Смотр-конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем вара çапла:

**«Район е предприяти (организаци), ял историйĕ» номинацире:**

- 1-мĕш вырăн - М.Г. Матросова тата Р.В. Иванова «Оринин: чĕрене хаклă çынсем тата сăнарсем» ĕçшĕн тата Муркаш район сучĕн коллективĕ «Муркаш район сучĕ» ĕçшĕн;
- 2-мĕш вырăн - Муркашри тĕп больница коллективĕ «Муркашри тĕп больница муниципаллă сывату учрежденийĕ» организаци историйĕ» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн - М.И. Пинарина «Ял историйĕ: Мăн Сĕнтĕр».

**«Геройсем юнашарах» номинацире:**

- 1-мĕш вырăн - Д.Ф. Саватеева тата Л.А. Иванова «Интернационалист-салтаксем - Тойкилтĕ шкулне вĕренсе пĕтерекенсем» ĕçшĕн;
- 2-мĕш вырăн - Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ «Пĕлĕр, çапла каччă пулнă вал» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн - Н.П. Давыдова «Геройсем юнашарах» ĕçшĕн.

**«Ыранхи паян пуçланать» номинацире:**

- 1-мĕш вырăн никама та парас темен;
- 2-мĕш вырăн - А.В. Федорова тата Н.А. Ершов «Ыранхи паян пуçланать» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн никама та парас темен.

**«Сирĕн шанчăклă партнер» номинацире:**

- 1-мĕш вырăн никама та парас мар;
- 2-мĕш вырăн - А.М. Шариков «Сирĕн шанчăклă партнер - Муркаш чăх-чĕп фабрики» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн никама та парас мар.

**«Ăнăçу никĕсĕ - сывă пурнăç йĕрки» номинацире:**

- 1-мĕш вырăн никама та парас мар;
- 2-мĕш вырăн - Р.О. Лоцманов «Ăнăçу никĕсĕ - сывă пурнăç йĕрки» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн - Муркаш район сучĕн коллективĕ «Ăнăçу никĕсĕ - сывă пурнăç йĕрки» ĕçшĕн.

**«Ку интереслĕ» номинацире:**

- 1-мĕш тата 2-мĕш вырăнсене никама та парас мар;
- 3-мĕш вырăн - Е.Ф. Федорова «Çармăçкасси ялĕн микротопонимĕ» ĕçшĕн тата В. Степанов «Çуткӳл» ĕçшĕн.

**«Муркаш районĕн бренчĕ» номинацире** ĕçсем пулман.

«Манăн Муркаш тăрăхĕ» номинацире:

- 1-мĕш вырăн - А.Э. Храмова «Ильинка - ĕнер, паян, ыран» ĕçшĕн;
- 2-мĕш вырăн - Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ «Атăл тăрăхĕнчи пирĕн ен» ĕçшĕн;
- 3-мĕш вырăн - Э. Степанова «Тăван ен» ĕçшĕн.

**«Историрен çаврăнса пăхни» номинацине** ĕçсем тăратнă О.И. Тарасова, Муркаш район сучĕн коллективне, В.Н. Кожевникова, В.С. Рубцова ырăпа асăнмалла.

Конкурс çĕнтерӳçисене дипломсем тата парнесем парса хавхалантартăмăр.

**В. ЛАВРЕНТЬЕВ,**
**район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ.**